

Yandex.ru сайтран.

# ЯЛТИ БИЗНЕС

сайт: putpobedy.ru

Проект авторĕ – Елена Порфирьева.

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.

## Ĕçлемесĕр пурлăх пулмасть



**Пилĕк авмасăр тутă пулма çук. Тĕнче ĕçчен те пултаруллă, пуçаруллă çынсем çинче тытăнса тăрать. Тивĕçлĕ канăва тухсан та маттуррисем ал усса лармаççĕ. Вăй çитнĕ таран ĕçе кӳлĕнеççĕ. Çемье бюджетне ӳстерес, тенкĕ çумне тенкĕ хушас тесе çичĕ тара ӳксе тăрăшаççĕ. Хастарлăхне кура вĕсене пачах та ватăсем тесе калас килмест.**

Мăньял Хапăсри Владимир Дмитриевич Скворцов 83 çулта, анчах та çемйипе мăйракаллă шултра выльăх-чĕрлĕх 5 пуç тата сурăх 8 пуç тытать.

– Выльăх йышлă, апатне çулсерен çителĕклĕ хатĕрлеме тăрăшатпăр, – терĕ кил хуçи.

Унăн хуçалăхĕнче виçĕ мотоблок, икĕ трактор. Темиçе техника пуррипе ĕç хăвăртлăхĕ ӳсет. Владимир Дмитриевич ывăлĕпе пĕрле ял хуçалăх машинисен юсавлăхĕшĕн тăрăшсах тимлеççĕ, çавăнпа та «хурçă утсем» чăхăмламаççĕ.

Скворцовсем ӳркенмеççĕ, выльăх-чĕрлĕхне хăйсемех пăхаççĕ. Икĕ ĕнипе икĕ вăкăрĕ, пушмак пăрăвĕ тата сурăхĕсем кĕтӳкасура пĕрле çӳреççĕ.

Хăшпĕрисем Скворцовсенчен кашни кун кĕтӳ-касу пăхса ывăнмастăр-и тесе ыйтаççĕ иккен. Паллах, çăмăлах мар, анчах та выльăхсене уйрăммăн пăхнин паха енĕсем те пур. Сăмахран, вĕсене сĕтеклĕрех вырăнсенче çӳретме майсем çителĕклĕрех. Тата ыр хуçасем юнашар пулнăран чĕрчунсем ешĕл курăкне те ытларах туртаççĕ, măш-măш сывласа тутлăн кавлеççĕ. Ĕнесем сĕт лайăх антараççĕ. Скворцовсем кашни кунах продукцие патшалăха сутаççĕ. Çемье бюджетне уйăхсерен вăтамран 14–15 пин тенкĕ укçа кĕрет. Ĕçченсем, акă, кĕр мăнтăрĕпе икĕ вăкăрне те вырнаçтарĕç. Каллех тупăш илĕç.

Ик-виç çул каялла мăйракаллă шултра выльăх-чĕрлĕх 7–8 пуç, сурăхсем 25–30 пуç таранах тытнă. Тĕнчипех шар кăтартнă хаяр чир – коронавирус – Скворцовсен çемйинчен те пăрăнмасăр иртмен. Ун чухне вара выльăх-чĕрлĕх йышне чакарма тивнĕ. Уттине те туяннă. Пурпĕрех выльăх-чĕрлĕхе пĕтермен.

Ĕçе ачаран кӳлĕннĕ Владимир Скворцовăн, паллах, шултра мăйракаллисен хисепне пысăклатас ĕмĕчĕ те пур. «Хаяр чире парăнтартăмăр. Малалла та вăй-халĕ пултăрччĕ, вара ĕçлеме ӳркенмĕпĕр, – çирĕплетрĕ ырă малашлăха шанакан хастар. – Ывăлпа хĕр пирĕншĕн – пысăк тĕрев. Хушма хуçалăха аталантарма пулăшаççĕ».

Ĕçчен алăра ĕç вĕрет. Пĕрре Вăрнара ГАЗельпе килнĕ чух Мăньял Хапăс ялĕ патне çывхараттăмăр. Ун чухне шăпах та Владимир Дмитриевичпа мăшăрĕ выльăхсене пăхма тухнăччĕ. Пассажирсенчен пĕри сасăпах хыттăн янраттарчĕ:

– Пăхăр-ха, мăньял-хапăссем маттурах ара. Тивĕçлĕ канури вăхăтпа тухăçлă усă кураççĕ. Эпир, ав, 55 çултан çеç иртнĕ пулсан та пĕр ĕне тытма ӳркенетпĕр,– терĕ хĕрарăм кăшт именерех. – Тен, кăçал хамăрăн та пĕр тына пăру туянмалла мар-и? Пирĕн енче çырми-çатри те çителĕклех, ешĕл улăхĕ те çумрах.

Владимир Скворцов Мăньял Хапăсрах çуралса ӳснĕ. Ашшĕ – Дмитрий Степанович – Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен таврăнайман, хыпарсăр çухалнă. Амăшĕ, Анастасия Никитична, 7 ачапа пĕчченех тăрса юлнă. Хĕн-хурлă саманара пуç усман. Хăйĕн тĕпренчĕкĕсене çĕршыва юрăхлă пăхса çитĕнтерес тесе çĕрĕнкунĕн тăрăшнă. Владимир Скворцовăн пĕртăванĕсенчен, шел те, паянхи кун пиччĕшĕ – Маркел Дмитриевич – кăна пурăнать. 92 çулта пулин те вăхăта сенкер экран умĕнче ирттермест. Пахча-анкартире тăрмашать.

Владимир Скворцов пиччĕшĕнчен тĕслĕх илнине пĕлтерчĕ. Çавăнпа та вăл пĕчĕкренех тăрăшулăхпа палăрнă. Ĕç тĕлне пĕлсе ӳснĕ. 10 çултах «Гигант» колхозра аслисемпе тан вăй хунă.

Сатур ача вĕренӳре те аван ĕлкĕрсе пынă. Пуçламăш классене вĕрентекенĕн Мария Платоновнан урокĕсене чăтăмсăррăн кĕтнĕ. Уйрăмах арифметика, чăваш чĕлхи предмечĕсене юратнă. Юман çулçинчи çăпанран юхтарнă чернилпа тăрăшсах çырнă.

13 çултах Çĕмĕрле районĕнчи Пĕнер чукун çул станцийĕнче монтерта тимленĕ. Волжскри ГЭС-а ĕçлекенсем кирлине пĕлсен вунулттăри хастар çамрăк теплоход çине ларса çула тухнă. Шалу пысăкрах пулин те, çулталăкран каялла таврăннă. Сăлтавĕ кил-çурт ыйтăвĕпе çыхăннă. Хваттер тупма çăмăлах пулман. Çуралнă тăрăха килсен Вăрнарти химзавода ĕçе вырнаçнă.

Салтака кайнă – арçын пулнă, теççĕ. Кашни йĕкĕтех салтак атти тăхăнма ĕмĕтленет. Мăньял Хапăсри тĕреклĕ каччăн те хĕсмете кайма ят тухнă. Владимир Скворцов Саратов облаçĕнчи Энгельс хулинче çар службинче тăнă. Чи малтанах вунă уйăх радиотелеграфист, электромеханик пулма вĕреннĕ. «1960 çулта ятарлă радиохумсемпе ĕçлеме пуçларăмăр», – аса илчĕ Владимир Скворцов. Вăл Юрий Гагарин, Герман Титов тĕнче уçлăхне вĕçнĕ чухне радиостанцире дежурствăра пулнă, космос çыхăнăвĕпе тивĕçтернĕ.

Салтакран таврăнсан Калининăри СПТУра вĕреннĕ, механизатор профессине алла илнĕ. Оренбург облаçĕнче практикăра пулнă, çерем уçма хутшăннă. Палăртмалла, Владимир Дмитриевич Йĕпреç тата Красноармейски районĕсенчи хаçат редакцийĕсенче корреспондентра вăй хунă, ял хуçалăх темипе статьясем çырнă. Тĕп редакторсенчен ыр сăмахсем сахал мар илтнĕ. В.Скворцов республикăри «Советская Чувашия», «Коммунизм ялавĕ» (халĕ «Хыпар») хаçатсемпе те çыхăну тытнă. «Çĕнтерӳ çулĕпе» халĕ те туслă. Мăньял Хапăс каччине шăпа Çурçĕре те илсе çитернĕ, геофизик тивĕçне виçĕ çул пурнăçланă.

Тăван ен чĕнĕвĕ хытах илĕртме пуçласан Чăваш ене таврăннă, Вăрнарта тĕпленнĕ. Чукун çул çинче, химзаводра тăрăшнă.

1992 çулта çемйипе тăван ялта çĕнĕ çурт лартнă, йывăç-тĕм чĕртнĕ. Мăшăрĕпе– Мария Андреевнăпа– ывăлпа хĕр çитĕнтерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă.

Мăньял Хапăсра тĕпленнĕренпе Скворцовсем мăйракаллă шултра выльăх-чĕрлĕх тытмасăр пĕр çул та пурăнман. «Ĕçлемесĕр пурлăх пулмасть, тетчĕ анне. Унăн халалне паянхи кун та асра тытса пурăнатăп», – çирĕплетрĕ кил хуçи.

**Елена ПОРФИРЬЕВА.**

## Грант шанăç парать

**Чăваш енри АПКан пĕчĕк формăллă хуçалăхĕсене патшалăх пулăшăвĕ парас тĕлĕшпе çĕнĕ майпа – «Малашлăх»/ «Перспектива» грантпа – усă курма пуçланă. Вăл «Пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕх тата хăй тĕллĕн ĕçлекен предпринимательсене пулăшасси» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн вăя кĕрсе пырать.**

Асăннă пулăшупа кăçал сыр хатĕрлес, çырла çитĕнтерес, пулă ĕрчетес (аквакультура таварĕ) ĕçре усă курма майсем пур. Грантпа конкурсра çĕнтернисене тивĕçтереççĕ. Унта вара фермер хуçалăхĕсем, хăйсем тĕллĕн ĕçлекен предпринимательсем, ял хуçалăх организацийĕсем, потребкооперативсем хутшăнма пултараççĕ. Грант калăпăшĕ – 8–10 миллион тенкĕ таран. Ăна илекенĕн асăннă суммăн 30 процентĕ чухлĕ хăйĕн нухратне хушма тивĕ. Çав укçана 24 уйăхра ĕçе кĕртмелле.

Субсидипе мĕн тума пулĕ-ха? Сăмахран, проектпа смета докуменчĕсене хатĕрлеме, производствăпа склад çурчĕсене туянма, хăпартма тата юсама, çуртсемпе хуралтăсене коммуникацисемпе çыхăнтарма, ятарлă автотранспорт тата производство хатĕрĕсем туянма тата ытти те.

Гранта тивĕçнисен палăртнă тапхăрта ялан ĕçлекен вырăнсем хатĕрлемелле. Сыр енĕпе вăй хураканăн – виçĕ çын, пулă ĕрчетекенĕн – икĕ çын валли. Çырла çитĕнтерекенĕн çак вырăнсене пилĕк çултан кая мар тытса тăмалла.

2021 çулта «Фермер шкулĕн» пĕрремĕш ушкăнĕнчен вĕренсе тухнă 27 çынран 12-шне хăйсен бизнесне аталантарма 89,6 миллион тенкĕ уйăрса панă. Çав шутран 10-шĕ – «Малашлăх» грант (81,7 миллион тенкĕ). Вĕсенчен 8-шĕнпе сыр хатĕрлеме, 1-пе – çырла тата теплицăра пахчаçимĕç çитĕнтерме, 2-шĕнпе çырла туса илме усă курĕç.

Çак пулăмсем – республикăра фермерсене хăйсен ĕçне-хĕлне йĕркелесе яма пулăшнин ырă тĕслĕхĕсем.

## Бизнеса пулăшма

ЧР Министрсен Кабинечĕ Пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕхе аталантарассипе ĕçлекен корпораципе килĕшӳ тунă. ЧР Пуçлăхĕ Олег Николаев каланă тăрăх, ку килĕшӳ республикăри бизнес представителĕсене ĕçлеме çĕнĕ майсем туса парать, вĕсен проекчĕсене пурнăçа кĕртме пулăшать. «Чăваш енре предпринимательсен шучĕ виçĕ хут ӳсрĕ. Патшалăх та пур енлĕн пулăшма тăрăшать. Акă кăçал вĕсем валли бюджетра 1,5 миллиард тенкĕ пăхса хунă. Çамрăк предпринимательсене грантсем парса хавхалантарăпăр», – тенĕ Олег Алексеевич.



## Ял малашлăхĕ – çамрăксенче

**Ӳркенмесен яш-кĕрĕмпе хĕрупраç хулара кăна мар, яллă тăрăхра та ĕç-хĕле тухăçлă йĕркелеме пултараççĕ.**

Паллах, пуçаруллă утăм тума çамрăксене тĕрев кирлĕ. Нумаях пулмасть тĕп библиотекăра ял хуçалăх техникумĕнчи студентсемпе тĕлпулу йĕркеленĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш заместителĕ – ял хуçалăхĕпе экологи пайĕн пуçлăхĕ Вячеслав Горбунов аграри тытăмне патшалăх епле пулăшни пирки чарăнса тăнă. Вячеслав Анатольевич ялта ĕçлес тĕллевлĕ çамрăксене кирлĕ сĕнӳсем панă, налук органĕнче регистрациленесси, продукцие туса илсе еплерех тупăшлă вырнаçтарасси çинчен ăнлантарнă.

Мероприяти усăллă иртнĕ, студентсем хăйсене кăсăклантаракан ыйтусене çĕкленĕ. Вячеслав Горбунов тулли хуравсем пама тăрăшнă.

– Мал ĕмĕтлĕ çамрăксенче – ял пуласлăхĕ, – тенĕ Вячеслав Горбунов. – Маттуррисем, акă, фермер ĕçне пуçăнса гранта çĕнсе илеççĕ.

Паллах ĕнтĕ, харпăр хăйĕн ĕçне, бизнеса йĕркелеме пултарччăр тесен çамрăксене шкулта ăс пухнă вăхăтрах производствăпа паллаштарни, рабочи профессийĕсемпе кăсăклантарни кирлĕ. Вăхăта пĕрмаях виртуаллă тĕнчере ирттерекен, вăй хумасăр хитре пурнăç çинчен ĕмĕтленекен яш-хĕр нихăçан та çăкăр хакне пĕлмĕ.